Чăвашăн Асăрхăвĕсем е ĕçлĕпĕр ĕç лечĕпĕр

1910 ç.

ÇУЛТАЛĂК КĔНЕКИ.

КАЛЕНДАРЬ.

На чувашскомъ языкѣ.

КАЗАНЬ.
ЦЕНТРАЛЬНАЯ ТИПОГРАФІЯ.
1910.

Чăвашăн Асăрхăвĕсем е ĕçлĕпĕр ĕç лечĕпĕр

Çулталăк кăларнă.

Юлийпе Григорій хунă çулталăк хисепĕсем. Христос çуралаҫҫăн 45 çул малтан Рим патшийĕ Юлій Цезарь, çулталăкра $365^1/_4$ тавлăк лăп пулĕ тесе, çĕнĕ çулталăк хисепĕ (календарь) кăларнă. Вăл хисепре виç çул йĕрипех, ула хыçлах, 365-шер тавлăк пулаť; тăваттăмăш çулта февралре 28 кун вырăнне 29 кун туса 366 хисеплеççĕ. Çан вăрăм çула Юлій bissextus тенĕ. (Вырăссем „високосный“ çул теççĕ) Ёмĕрсем иртнĕ, çынсем çулталăкра $365^1/_4$ тавлăк маррине пĕлнĕ—11 мин. 14 секунд кайа мĕн. Çак 11 мин. 14 сек. 400 çулта 3 кун та 2 сех. 35 мин. 20 сек. тăваççĕ; çавăнпа Римри папа XIII Григорій 1582 ç. октябрĕн 4-мĕш кунĕнҫе кĕçнерни кун килесе ерне куна 15-мĕш октябр тесе хисеплеме хушнă. Григорій хунă çулталăк хисепĕпе вăрăм (високосный) çул та урăх тĕрлĕ тухаť. 1700 çултан пуçласа çĕр çулсенҫен тăваттăмăшĕ анҫах „вăрăм“, ыттисем пур те ахаҫ çулсем:— çапла 1700, 1800, 1900 ç.ç. кĕске çулсем, 2000 вăрăм çул.

Халĕ Григорій кăларнă çулталăк хисепĕ тăрăх (вăл хисепе пирĕн патшалăхсенҫен пуçне пур çĕрте те тытаççĕ) кунсем пирĕнҫен, Юлій хисепĕнҫисенҫен, 13 кун малта пыраççĕ; çавăнпа вăл хисепри уйăх-кунĕсене пĕлес тесен хамăр уйăх-кунĕсем çумне 13 хушас пулаť. Ку кĕнеке çинҫе малта Юлій кăларнă хисепĕнҫи кунĕсене (кивĕ стил) лартнă, кайра Григорій кăларнă хисеприсене (çĕнĕ стил)

Куçакан праçниксем.

çулсем.	хĕллехи ўт.		кĕçĕн çăварни.		Пасха.		çулçă праçникĕ-Троица		Питрав типпи.	
	ерне	кун	февр.	март.	март.	апр.	май	іюнь	ерне	кун
1910	8	3	28	—	—	18	—	6	2	1
1911	7	2	20	—	—	10	29	—	5	2
1912	5	1	5	—	25	—	13	—	5	4
1913	7	6	24	—	—	14	—	2	2	5
1914	6	5	16	—	—	6	25	—	3	6
1915	4	4	1	—	22	—	10	—	3	—

Минҫет тума йураман кунсем.

1) Ытлари-кун, кĕçнерни-кун, шăмат кун йурамасť. 2) Праçник умĕн, йе урăх аслă кун умĕн йурамасť. 3) 15-мĕш ноябртен пуçласа 6-мĕш январҫҫен йурамасť. 4) Çăварни ернинҫе, пĕтĕм аслă типĕре, мун-кун ернинҫе йурамасť. 5) Питрав типпинҫе, тата Турă Амăшĕ типпипе Раштав типпинҫе йурамасť. 6) Шыва кўртекен Іоанн пуçне каснă кун умĕн, тата Турă Хĕресне çĕкленĕ кун йурамасť.